П. ГРИГОРЬЕВ

# Никита Яковлевич Бичурин

(*Вилнӗренпе 100 ҫул ҫитнӗ май*)

Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫӗршывсене, уйрӑмах Китая, Монголие, Тибета тата Вӑтам Азипе Ҫӗпӗре тӗпчесе вӗренекенсем Никита Яковлевич Бичурин ӗҫӗсене лайӑх пӗлеҫҫӗ. Вӑл XIX ӗмӗрӗн малтанхи ҫурринче Китая, унӑн культурипе йӑлине тата чӗлхипе ҫырулӑхне тӗпчесе вӗреннӗ.

Бичурин ӗҫӗсем пичетленсе тухни Россия культуринче пысӑк событи пулнӑ, мӗншӗн тесен шӑп ҫав вӑхӑтра акӑлчансемпе французсем Азири ҫӗршывсене хӗҫпӑшалпа тата тӗрлӗрен ултавпа пырса кӗрсе, вӗсене хӑйсен колонийӗсем тӑва-тӑва хунӑ. Парижпа Лондонри ученӑйсемпе писательсем вара Азири халӑхсене, ҫав шутрах китаецсемпе монголсене те аялта тӑракан раса ҫыннисем тесе, капиталистсен вӑрӑ-хурахла ӗҫӗсене идеологи енчен тӳрре кӑларма тӑрӑшнӑ.

Бичуринӑн Китай, Монголи, Тибет халӑхӗсем ҫинчен чӑн ҫырса кӑтартнӑ нумай кӗнекисем шӑп ҫак вӑхӑтра пичетленсе тухнӑ. Бичурин Азири халӑхсен авалхи культурине, хресченсем ӗҫе юратнине, алӑстисемпе художниксен ӑсталӑхне юратса, пӗлсе ҫырса кӑтартнӑ пулнӑ.

Бичурин Китай ҫинчен ҫырнӑ кӗнекисем пӗтӗм тӗнчипе паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ, вӗсене Европӑри нумай чӗлхесем ҫине куҫарса пичетлесе кӑларнӑ. Тӗнче наукишӗн Бичурин калама ҫук пысӑк ӗҫ тунӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ пӗр ют ҫӗршыв ҫынни Бичурин ҫинчен ҫапла каланӑ: „XIX ӗмӗрӗн малтанхи ҫурринче Китая тӗпчесе пӗлес тӗлӗшпе вӑл тӗнчери мӗнпур ученӑйсем пӗрле тунинчен те чылай ытларах ӗҫ тунӑ“, тенӗ.

Капитализма пулӑшакан буржуалла наукӑра Никита Яковлевич Бичурина, унӑн наукӑри ӗҫӗсене манӑҫа кӑларма тӑрӑшаҫҫӗ, мӗншӗн тесен унӑн шухӑш-кӑмӑлӗсем империалистсем колонисене пусмӑрланине хирӗҫ пыраҫҫӗ.

Ӗлӗкхи патша Российинче те ҫавӑн пекех пулнӑ. Вӑл вӑхӑтри йӗркесемпе йӑласене пула, Бичурин ун чухне чапа тухман, унӑн пархатарлӑ та усӑллӑ ӗҫӗсене наука ҫыннисем кӑна пӗлнӗ, Бичурин ҫинчен ҫыракансем те унӑн пурнӑҫне, наукӑри ӗҫӗсене шупкалатса сӑнласа кӑтартнӑ.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче тин Бичуринăн наукăри ĕçĕсемпе пурнăçне тĕпчесе вĕренме тытăннă та тивĕçлипе хак панă. Вăл, В. Щукин публицист 1857 ç. çырса хăварнă тăрăх, „аялтан çĕкленнĕскер... влаçа пăхăнса тăмалла пулнăскер, Александро-Невски лаврăри ахаль монах пулса вилсе каять. Малашнехи ăрушăн усăллă ĕçĕсĕр пуçне ытти пурте пĕтет".

Бичуринăн Китай çинчен çырнă ĕçĕсене чылайăшĕ пĕлеççĕ пулсан, Бичурин епле çын пулнине, вăл декабристсемпе— XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Российăри малта пыракан çынсемпе тата вăл вăхăтри паллă писательсемпе, художниксемпе—Пушкинпа, Крыловпа, Брюлловпа тата ыттисемпе çыхăну тытнине, кĕскен каласан, Бичуринăн пурнăçне питех те сахал тĕпчесе вĕреннĕ-ха, тата ăна тĕпчесе вĕренмелли материалсене те юлашки çулсенче кăна шыраса тупнă.

I

Никита Яковлевич Бичурин 1777 çулхи августăн 29-мĕшĕнче, Шупашкар уездĕнчи Шĕнерпуçĕнче (халĕ Октябрьски район) чухăн тиечук çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ Яков Петров ятлă чăваш, амăшĕ—вырăс хĕрарăмĕ пулнă. Шалу укçи тăранса пурăнма çитмен пирки, ашшĕ тырпул та акса тунă тата тăлмач ĕçĕпе те кăштах ĕçлекеленĕ.

8 çула çитсен, Никитăна Сĕвери новокрещенски шкула, „нота тăрăх юрлакансен класне" вĕренме панă, темиçе çул вĕренсен, ăна Хусана духовнăй семинарие куçарнă. Семинарире вăл 1788 çултан пуçласа 1799 çулччен вĕреннĕ.

Семинарири йăла тăрăх, хушаматсăр вĕренекенсене пурне те хăйсен тăван ялĕн, прихучĕн, е престол праçникĕн ятне кура хушаматсем панă. Çапла вара 12 çулхи Никита, хăйĕн тăван ялĕн вырăсла ячĕ тăрăх, Бичуринский пулса тăнă. Бичуринский хушаматпа вăл Хусанти Амвросий архиепископа хисеплесе çырнă пĕр сăвă айне кăна алă пуснă, каярахпа „ский" сыпăка кăларса пăрахнă та, „Бичурин" кăна хăварнă.

Бичурин питĕ пултаруллă пулнă, лайăх вĕреннĕ. Çакăншăн ăна семинари преподавателĕсемпе администрацийĕ юратнă. Уйрăмах ăна семинари ректорĕ Амвросий Подобедов хисепленĕ. Çак Амвросий, синодăн яланхи членĕ пулнă май, каярахпа та темиçе хутчен çамрăк Бичурин хутне кĕнĕ.

Бичурин вĕренсе тухас чух Хусанти духовнăй семинарирен духовнăй академи туса хунă. Вĕренсе тухнă хыççăн Никита Яковлевича малтан грамматика преподавателĕ туса академирех ĕçлеме хăварнă, каярахпа красноречи преподавательне куçарнă.

Семинарире Никита Бичурин латынь, француз, нимĕç чĕлхисене лайăх вĕренсе çитнĕ, çак чĕлхесемпе вăл вуланă та, çырнă та. Çавăн пекех вăл ўкерчĕксем тума та вĕреннĕ. Бичуринăн сасси лайăх пулнă.

Ашшĕ шухăшĕпе тата семинари пуçлăхĕ палăртнă тăрăх та, Никита Яковлевичăн академирен вĕренсе тухнă хыççăн пĕр-пĕр

чăваш прихутне пупа каймалла пулнă. Анчах Никита темшĕн пупа кайман. 1800 çулта вăл монаха тухнă та, ăна çĕнĕ ят—Иакинф ят панă.

Семинарире вĕреннĕ малтанхи çулсенче, çуллахи каникулсем вăхăтĕнче, Никита тăван ялне киле-киле кайнă, анчах амăшĕпе ашшĕ вилсе кайнă хыççăн, вăл яла пырса çӳреме пăрахнă.

Çамрăк Никитăна монáха тухма мĕн хистенине калама йывăр. Унăн амăшĕ енĕпе пĕр тăванĕ Н. С. Моллер 1887 çулта кун пирки çапла каласа панă: Никита Хусанти семинарире амăшĕн тăванĕн ывăлĕпе—Александр Васильевич Корсунскипе пĕрле вĕреннĕ, вĕсем пĕр-пĕринпе питĕ туслă пулнă. Академирен вĕренсе тухнă хыççăн, вĕсем иккĕшĕ те пĕр хĕре—Татьяна Лаврентьевна Саблуковăна юратса пăрахнă. Вара вĕсем, пĕр-пĕринпе хирĕçсе каяс мар, ĕмĕрлĕхех туслă пулас тесе, çав хĕре пĕр харăсах çураçма шут тытнă. Калаçса татăлнă тăрăх, хĕр кама килĕштерет—вăл авланать, теприн вара монаха тухмалла пулнă. Хĕр Корсунские килĕштернĕ, Никита, сăмаха пăсас мар тесе, монаха тухнă.

Чăннипе çамрăк Никита урăх сăлтавсем пирки те монаха тухма пултарнă. Паллă ĕнтĕ, кунта Никита тăлăха юлни те, семинарири воспитани те, тата семинари ректорĕ Амвросий Подобедов хистени те чылаях палла вырăн йышăнса тăнă пулмалла.

1802 çулта Иакинфа архимандрит тата пĕр вăхăтрах духовнăй семинари ректорĕ туса Иркутск хулине Вознесенски монастырьне янă. Сăмах майĕн каласан, Иакинф пек 24 çулти çамрăк монахсем çакнашкал пысăк вырăна пачах та тенĕ пек йышăнайман. Çак тĕслĕх, паллах ĕнтĕ, ăна такам хӳтĕленине кăтартса парать (тен, çав Амвросиех пулĕ).

Иркутскра Иакинф икĕ çула яхăн пурăннă. Кунта вăл „çылăха кĕнĕ“. Тобольскпа Иркутскри государство архивĕсенчи материалсем тăрăх, ун патĕнче, кельйăра, послушник пулса, пĕр хĕр пурăннă имĕш. Çакăншăн Бичурина синод „архимандрит пулма тата архимандрит хĕресне çакса çӳреме“ чарнă, „монастырь ĕçĕсене тытса пырассинчен тата ректортан хăтарнă“.

Бичурина „шанчăклă духовнăй çын сăнаса, асăрхаса пурăнмалла“ тесе Тобольскри Знаменски монастыре пурăнма янă. Кунта ăна Тобольскри духовнăй семинарин красноречи преподавателĕ туса хунă. Тобольскра вăл 1807 çулччен пурăннă. 1806 çулта синода çырса пĕлтернĕ тăрăх, Тобольскра „Иакинф хăйне тӳрĕ те урă тыткаланă, семинарири красноречи учителĕн ĕçĕсене лайăх, кăтартуллă туса пынă“.

## II

1807 çулта Бичурина Пекинри духовнăй миссин начальникĕ тата Пекинри Сретенски монастырĕн архимандричĕ туса Китая янă. Маларах Пекинра пулнă Софроний Грибовскин мисси-

йĕнчи нумай членсене Хусанта, Хусанти семинарирен вĕренсе тухнăскерсене, Амвросий Подобедов пулăшнипе пухнă пулнă. Çак çынсем хушшинче Бичуринпа пĕрле семинарире вĕреннĕ çынсем те, унăн юлташĕсем те сахал мар пулнă. Бичурина Пекина кайма вĕсем те пулăшнă пулĕ. Пуринчен ытларах, паллах ĕнтĕ, ăна хăйне юратакан Амвросий Подобедов, ку вăхăт тĕлне митрополит пулнăскер, чи пысăк пулăшу панă. 1805 çулта синод, граждански влаçсемпе калаçса татăлнă тăрăх, Пекинри духовнăй миссие улăштарса çĕнетме тытăннă. Çакна май Амвросий Подобедова Пекинри мисси çинчен, вăл мĕн пирки çителĕксĕр ĕçлени çинчен тивĕçлĕ сведенисем пухма хушнă. Митрополит хăйне хушнă ĕçе часах туса пĕтернĕ те ун çинчен синода çырса панă. Подобедов Пекинри миссин ĕçĕсемпе интересленнĕ май, паллах, хăй вĕрентсе хатĕрленĕ пултаруллă çынна аса илсе, кирлĕ çĕрте унăн ятне калама пултарнă.

Çитменнине тата шăпах çак вăхăтра Пекина мисси ямалли урăх сăлтавсем те пулнă. 1805 çул вĕçĕнче Головкин граф ертсе пынипе Китая посольство янă. Унпа пĕрлех тата 9-мĕш миссин пуçлăхĕ туса Аполлос архимандрита ямалла тунă. Анчах лешĕ Иркутска çитнĕ те Пекина кайма килĕшмен. Вара посольство каясси те чарăнса ларнă, мисси валли пуçлăх шырама тытăннă. Çакăнпа усă курса, Подобедов мисси пуçлăхĕ тума синода Бичурина сĕннĕ пулас. Синод Бичурин кандидатурипе килĕшнĕ, ăна часах архимандрит прависене тепĕр хут панă та, 9-мĕш мисси пуçлăхĕ туса хунă.

Мисси Иркутскран 1807 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнче тухса кайнă та, 1808 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче Пекина çитнĕ.

Пекинра Бичурин 14 çул—1822 çулччен пурăннă. Çак вăхăтра вăл калама çук пысăк ĕçсем тунă. Малтанхи тăватă çул хушшинчех вăл китай чĕлхине питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ, каярахпа монгол чĕлхине те вĕреннĕ.

Пĕр литература журналĕнче çырнă тăрăх, Бичуринăн хăйĕн те сăн-сăпачĕ Китай çыннинни пек пулнă. Çапла вара вăл китайла тумланса, Пекинпа ун таврашĕнчи тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсем—китаецсем, монголсем, маньчжурсем, тибет çыннисем хушшине час-часах тухса çӳренĕ. Çакă ăна халăх калаçакан чĕлхене вĕренме пулăшнă. Вăл нумай вуланă, китаецсен литература чĕлхине вĕреннĕ.

Çакăншăн мисси членĕсемпе посольство членĕсем нумайăшĕ Бичурина юратман, теприсем питех те курайман.

Тĕрлĕрен ĕçсене пула Бичурин ытти çĕршывсен миссионерĕсемпе те, уйрăмах Ферейрпа тачă çыхăну тытнă, çакă ăна ĕлĕкрех Китая тĕпчесе пĕлнĕ синологсен ĕçĕсемпе тĕплĕнрех паллашма май панă.

Пекинра ун чухне Португали миссийĕ питĕ пуян библиотека тытнă, çак библиотекăра Китай çинчен тĕнчере çырнă кĕнекесем пурте тенĕ пек пулнă. Библиотекăри кĕнекесемпе усă курни Бичурина Китайпа, унти халăхпа, халăх йăлисемпе

тата унӑн культурипе паллашма, çавӑн пекех Китай чӗлхине вӗренме те нумай пулӑшнӑ.

Китай чӗлхине лайӑх вӗренсе çитнӗ хыççӑн, Бичурин „Китай чӗлхин грамматикине тата Базиль де Клемонӑн словарьне" тӳрлетсе хушса çырма тытӑннӑ. Словаре вӑл географи, истори, техника терминӗсене тата ялан усӑ куракан сӑмахсене нумай хушса кӗртнӗ, пысӑклатнӑ.

Бичурин Китай чӗлхипе çырнӑ питӗ нумай кӗнекесем вуланӑ. Е. Ф. Тимковский çӳревçӗ каласа панӑ тӑрӑх, „Бичурин китайла нумай вӗреннӗ китаец çынни пекех калаçать... Вӑл Китай историйӗ çинчен 270 том, статистика 18 том, энциклопеди 20 том, словарь 6 пысӑк том тата темӗн чухлӗ ытти документсемпе сочиненисем вуласа тухнӑ". Çаксене пурне те вӑл китай чӗлхипе вуланӑ.

Китай чӗлхин грамматикине тата словарьне çырса хатӗрленипе пӗр вӑхӑтрах Бичурин китаецсен ӑслӑлӑхӗн тӗп мулӗ шутланакан „Сы-шу" (Тӑватӑ кӗнеке) ятлӑ произведенине вырӑсла куçарнӑ, Китай историне, географине, статистикине питӗ тӗплӗн вӗреннӗ.

Çак вӑхӑтрах вӑл тата „Тибет çинчен", „Хул касасси çинчен", „Суд медицини çинчен", „Чжунгари, Хӗвелтухӑç Туркестан çинчен" çырнӑ кӗнекесене тата ытти нумай пысӑк кӗнекесене Китай чӗлхинчен вырӑсла куçарать.

Бичурин Пекинра çырнӑ ӗçсем, тӗпрен илсен, виçӗ ушкӑна пайланса тӑраççӗ.

1. Словаре хушса çырни тата Китай чӗлхин грамматики тӗлӗшпе ӗçлени. Вӑл 12 пин сӑмах кӗртсе китайла-вырӑсла словарь, 4 томлӑ маньчжурла-китайла словарь çырнӑ, вырӑсла-китайла пӗчӗк словарь çырма пуçланӑ.

2. Китай, Монголи тата Тибет историйӗпе географийӗ çинчен çырнӑ кӗнекесене вырӑсла куçарнӑ. Вӑл 18 томлӑ „Большая часть географического описания Китайского государства", 10 томлӑ „История Китая и полная география всех земель, подвластных этой империи", „Сокращенные монгольские Уложения и нескольких китайских сочинений о Тибете" ятлӑ кӗнекесене тата ыттисене те вырӑсла куçарнӑ.

3. Пекинра пурӑннӑ вӑхӑтра Бичурин „Описание Пекина с китайского подлинника 1788 года и план города, снятый в 1817 г." ятлӑ кӗнеке çырнӑ. Пекин планне ӳкерсе илес тесе, Бичурин çулталӑк ӗçленӗ: вӑл Пекинри кашни урампа тӑкӑрлӑка утса та виçсе тухнӑ; Пекин йӗри-тавращӗ 31-çухрӑм та 322 чалӑш пулнине шутласа кӑларнӑ. Кунтах вӑл китаецсен, маньчжурсен, монголсен, кореецсен, Туркестанпа Тибетри халӑхсен арçынӗсемпе хӗрарӑмӗсен 49 тӗрлӗ тумтирне ӳкерсе илнӗ. Çак альбома халӗ те Ленинградри Публичнӑй библиотекӑра усраççӗ.

9-мӗш миссии Пекинра пулнӑ вӑхӑтра 1812 çулхи Отечественнӑй вӑрçӑ пынӑ. Россия миссие тытса усрама вӑхӑтра укçа

ярса парайман. Çакна пула Бичуринăн—мисси пуçлăхĕн—ирĕксĕрех чиркӳ пурлăхне заклада хывса кивçене кĕмелле, чиркӳ пурлăхне сутмалла пулнă. Ку япала асăрханмасăр юлма пултарайман: Бичурин çинчен синода жалобăсем пыма тытăннă. Вара 1821 çулта 9-мĕш миссие Пекинран каялла Российăна чĕнсе килме йышăннă.

III

Вырăс государствин ун чухнехи тĕп хулине Питĕре Бичурин 1822 çулта таврăннă. Çула май вăл хăйĕн тăван ялне кĕрсе, унта темиçе кун пурăннă.

Российăна вăл питĕ пысăк пуянлăхпа—Китай çинчен хĕвелтухăçĕнче пурăнакан халăхсен чĕлхипе çырнă кĕнекесем, тĕрлĕрен культура япалисем питĕ нумай илсе таврăннă. Пĕр кĕнекисене кăна вăл 15 тĕве çине тиесе килнĕ. Вĕсене Бичурин Петербургри Публичнăй библиотекăна тата Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Ази департаментне панă.

Маларах асăннă Тимковский каланă тăрăх, „100 çул хушшинче Россия империйĕн Пекинри малтанхи сакăр миссийĕ пурĕ пĕрле те çак юлашки мисси чухлĕ усăллă сочиненисем палăртман“ пулин те, Россия Бичурина хапăлласа кĕтсе илмен. „Чиркӳ пурлăхне сутнăшăн“ тата хăйне хăй тивĕçсĕр тыткаланăшăн айăпласа, духовнăй суд ăна архимандритран кăларса Ладога кӳлли варринчи утраври Валаам монастырьне пурăнма янă.

Чăн та, ун чухнехи йĕркесем тăрăх, Бичурина, уйрăмах та чиркӳ служительне, айăпламалли сăлтавсем пулнах ĕнтĕ. А. В. Никитенко академик 1865 çулта хăй маларах асăннă Тимковскипе (10-мĕш миссие Китая ăсатнă тата 9-мĕш миссие каялла илсе килнĕ штабс-капитанпа) калаçни çинчен çапла аса илет:

„...Вăл мана Иакинф Бичурин çинчен питĕ нумай каласа пачĕ. Иакинфа эпĕ хам та лайăх пĕлетĕп...

— Иакинф çинчен эсир пурне те тенĕ пек пĕлетĕр,—терĕм эпĕ ăна.—Эсир ăна çывăх çын. Калăр-ха: хăйне хăй вăл Китайра чăнахах та çынсем каласа панă пекех тивĕçсĕр тыткаланă-и? Ун çинчен каласа панисене илтсен, çӳç-пуç вирелле тăрать вĕт: вăл чиркӳре нихçан та служить туман пулать, чиркӳ пурлăхне те сутса пĕтернĕ имĕш, тăнне çухатиччен ĕçнĕ, китаянкăсемпе пĕрле тивĕçсĕр вырăнсене тухса çӳренĕ...

— Ку вăл,—терĕ мана хирĕç Тимковский,—пурте тенĕ пек тĕрĕс. Вăл питĕ пултаруллă, ăслă та ырă çын, анчах чăтма çук эпикуреец тата ĕçекенскер. Духовнăй звани ăна кăмăла каймасть, унта вăл ăнсăртран пырса лекнĕ. Вăл Амвросий митрополитăн вĕлтрен çинчи ывăлĕ, çавăнпа та митрополит ăна 22 çулта чухнех Иркутскра архимандрит туса хунă. Пекина посланник туса янă. Головкин граф вăрттăн хăтланнине пула Аполлос архимандрита Пекина ямалли мисси пуçлăхĕнчен кă-

ларсан, çав Амвросий тăрăшнипех Иакинфа мисси пуçлăхĕ туса хунă. Çакăнтан пуçланаççĕ те ĕнтĕ унăн Пекинри хăюллă та харсăр ĕçĕсем. Валаамра вăл çывăратчĕ, уçăлса çÿретчĕ, ĕçсе ÿсĕрлетчĕ. Ун патне кельйăна игумен пырса, ăна кĕлле чĕнсен, яланах вăл çапла калатчĕ: „Игумен аттем, чиркĕве эсир пĕчченех кайăр, эпĕ çичĕ çул ĕнтĕ ун пек çылăха кĕместĕп", тетчĕ. Унтан ăна час-часах Симеони çывăхĕнче монах тумĕпе, анчах çаврака шлепке тăхăнса, икĕ пикене хултан тытса çÿренине куркаланисем пулнă. Çавăн пек, питĕ çылăхлăччĕ çав Иакинф атте".

Анчах Бичурин Китая тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе тунă ĕçсене асăнмасăр пытарса усрама май пулман, мĕншĕн тесен вăл чăннипех те пултаруллă та ăслă çын пулнă. Çавăнпа вăл вилнĕ хыççăн çапла çырнă: „Вырăс государствин Пекинри миссийĕ Китая тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе 150 çул хушшинче те Бичурин пĕр-пĕччен тунă ĕçсен чĕрĕкне те тăвайман".

Валаамра Бичурин 4 çул ытла—1826 çулччен пурăннă. Кунта, монастырь режимне пăхмасăрах, вăл яланах ĕçленĕ, пуринчен ытла китай чĕлхипе çырнă кĕнекесене вырăсла куçарнă.

1826 çулхи июль уйăхĕнче, Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Ази департаменчĕ тăрăшнипе, Бичурина Валаамран кăларса Ази департаменчĕн тăлмачĕ туса хунă, пурăнма, монахра хăварсах, Александро-Невски лаврăна вырнаçтарнă. Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви Бичурина тата унăн ĕçĕсене тивĕçлипе хакланă, ăна пулăшу пама тăрăшнă, мĕншĕн тесен „Китай чĕлхине, литературине ун пек лайăх пĕлекенни Российăра урăх никам та пулман".

Бичуринăн ĕçĕсене Англири ученăйсен королевски обществи те, Францири Ази обществи те тата ытти наука учрежденийĕсем те паллă вырăна хунă, вĕсем унăн чылай произведенийĕсене хăйсен чĕлхипе куçарса кăларнă.

Бичурин китаецсен тата Китайпа кÿршĕллĕ ытти çĕршывсенчи халăхсен историйĕ, географийĕ тата мĕнпур йăлисем çинчен нумай кĕнекесем çырнă.

„Статистическое описание Китайской империи" ятлă кĕнекен умсăмахĕнче вăл хăйĕн нумай ĕçĕсен планĕпе тĕллевне çапла кăтартса панă: „Ку таранччен куçарса тата çĕнĕрен çырса кăларнă тĕрлĕрен нумай кĕнекесен тĕллевĕ вăл—шалти Китая каймалли çул çинче выртакан çĕршывсем çинчен пĕлтересси пулнă. Чи малтанах Тибета, Туркестана тата Монголие пăхса тухмалла, мĕншĕн тесен çак çĕршывсем Китайпа тачă çыхăну тытаççĕ тата Китай хăй те шăпах çак çĕршывсем урлă Индипе, Вăтам Азипе тата Российăпа çыхăну тытать. Малтанах çак асăннă çĕршывсен географилле вырăнĕпе политикăлла ларутăрăвне пăхса тухмалла, унтан вара политика тĕлĕшпе çав çĕршывсем çине Китай мĕнле пăхнине кăтартса памалла".

Бичуринăн ĕçĕсене тĕнчери наука питĕ пысăка хурса хак-

ланӑ. 1828 ҫулхи декабрӗн 29-мӗшӗнче ӑна Росси́я Наукисен академийӗн член-корреспондентне суйланӑ. Ҫавӑн пекех вӑл Франци́ри Ази обществин членӗ, Англири ученӑйсен королевски обществин членӗ тата ытти нумай наука организацийӗсен членӗ пулнӑ. Бичурин ҫырнӑ ултӑ произведение пӗрремӗш е иккӗмӗш степень Демидов премийӗсем панӑ.

## IV

Бичурин наукӑра 30 ҫул ытла ӗҫленӗ. Ҫак вӑхӑтра вӑл Китай, Монголи тата Тибет ҫинчен чылай кӗнекесем ҫырса пичетлесе кӑларнӑ. Пӗр француз—хӗвелтухӑҫӗнчи чӗлхесен профессорӗ Клапрот каланӑ тӑрӑх, „Иакинф атте пӗччен тунӑ ӗҫе тепӗр научнӑй общество та тӑваяс ҫук".

Бичурин питӗ нумай ӗҫлеме пултарнӑ тата унӑн ӗҫӗ те тухӑҫлӑ пулнӑ. Вӑл ҫӗнӗ сочиненисем ҫырнӑ, киввисене тепӗр хут пичетлесе кӑларма тӳрлетнӗ, китай чӗлхинчен вырӑсла куҫарнӑ. Хӑшпӗр произведенийӗсем, пичетлесе кӑларма авторӑн вӑйӗ ҫитеймен пирки, ҫулталӑкӗ-ҫулталӑкӗпех хӑй патӗнче выртнӑ. (Ун чухне писательсемпе ученӑйсем кӗнекесене хӑйсен укҫипе кӑларттарнӑ.)

Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин Ази департаменчӗ, Наукӑсен академийӗ тата уйрӑм ҫынсем пулӑшнипе ҫапах та вӑл чылай произведенисене пичетлесе кӑларнӑ. „История Тибета и Хухунора" ятлӑ сочинение Бичурин, сӑмахран, I Александр двореҫӗнче чылаях паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ З. А. Волконская княгиньӑна халалланӑ. Сӑмах майӗн каласан, Волконская вӑл вӑхӑтри литература движенийӗнче чылаях паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ; унӑн Петербургра литература салонӗ пулнӑ. Унта Пушкин, Лермонтов, Гоголь тата ытти писательсем те пухӑннӑ. Унта час-часах Бичурин та пырса ҫӳренӗ.

Хӑшпӗр кӗнекисене тата вӑл хӑйӗн хушаматне лартмасӑрах, кӗнеке кӑлараканнин е кӑларма пулӑшаканнин хушаматне ҫеҫ кӑтартса та пичетлесе кӑларнӑ.

Россия Наукисен академийӗн бюрократла пуҫлӑхӗсем Бичурина „иртӗхме" паман. I Николай патша Бичурина монахран кӑларма йышӑннине ҫирӗплетменнине пӗлсен, Наукӑсен академийӗн пуҫлӑхӗсем унӑн кӗнекисене пичетлесе кӑлармашкӑн чӑрмантарма та хӑтланса пӑхнӑ.

Анчах Китая, Китай халӑхӗн чӗлхипе литературине, йӑлисемпе культурине лайӑх пӗлни ӑна калама ҫук пысӑк пулӑшу панӑ. 1826 ҫулта Россия Наукисен академийӗ Китай библиотекин каталогне тума Парижран Броссе профессора чӗнсе килнӗ. Кунта вара кулӑшла ӗҫ пулса иртнӗ. Каярахпа Бичурин ун ҫинчен Погодин патне ҫырнӑ ҫырура ҫапла каласа панӑ:

„...Броссе, нумай вӑхӑт иртнӗ пирки, китаецсен сӑмах пӗлтерӗшӗсене пурне те аса илейместӗп, терӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара вӑл Китай чӗлхин профессорӗ пулма пӑрахса, армянпа грузин

чĕлхисен профессорĕ пулса тăчĕ. Эпĕ каталог çырса хатĕрлерĕм, уншăн кĕмĕл укçапа 200 тенкĕ илтĕм, Броссе господин вара çав каталогшăнах орден илчĕ. Сĕмсĕр те намăссăр мар-и ĕнтĕ вăл?"—тенĕ.

Çапла пулнă ĕнтĕ патша саманинче. Ун чухнехи Российăри феодалла-крепостникла йĕркесем наукăпа литературăна аталанма калама çук пысăк чăрмавсем тунă. Халăхран тухнă çынсене вара тата та йывăртарах пулнă. Вырăс ученăйĕсен çулне пӳлсе пынине Броссепе Бичурин хушшинче пулнă ĕç те питĕ лайăх кăтартса парать.

V

Бичурин кĕнекисем, вăхăт тăрăх илсен, çапла пичетленсе пынă: унăн чи малтанхи „Китай çинчен ыйтнине хирĕç панă ответсем" ятлă кĕнеки 1827 çулта Петербургра пичетленсе тухнă. Каярахпа çак пĕчĕк кĕнекене Бичурин хăйĕн „Китай" ятлă пысăк кĕнекин IX сыпăкĕ тунă.

1828 çулта Бичурин китай чĕлхинчен вырăсла куçарса тата хăйĕнчен хушса çырса „Описание Тибета в нынешнем его состоянии" ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. 1831 çулта çак кĕнекене французла куçарнă. Çав çулах Бичурин хăйĕн „Записки о Монголии" ятлă икĕ томлă пысăк сочиненине пичетлеттернĕ. Кунта вăл монголи карттине тата монголсен тĕрлĕрен тумĕсен ӳкерчĕкĕсене, хăй ӳкерсе илнĕскерсене, хушса кĕртнĕ. Асăннă сочиненин пĕрремĕш томĕнче китайла тумланнă авторăн сăнӳкерчĕкĕ пулнă, ун айне „Ят-сумлă китаец çуллахи тумпа", тесе çырса хунă. Ку сочиненин чылай пысăк пайне хăй Монголипе Китайра çӳренĕ чухне çырса пынă дневник йышăннă. Пĕр çул кăна иртнĕ—ăна Францipe Германире куçарса пичетлесе кăларнă.

1829 çулта Бичурин икĕ томлă „Описание Чжунгарии и Восточного Туркестана в древнейшем и нынешнем его состоянии", „Описание Пекина 1788 года с приложением плана сей столицы, снятого в 1817 г.", китай чĕлхинчен вырăсла куçарса „История первых четырех ханов из дома Чингисова" тата китай чĕлхинчен вырăсла куçарса „Троесловие" пичетлесе кăларнă. „Пекин çинчен çырнине" тата „Чингиссен çурчĕн историне" французла тата нимĕçле куçарса кăларнă.

1831 çулта Бичурин китай чĕлхинчен вырăсла куçарса икĕ пайлă „История Тибета и Хухунора с 2282 г. до Р.Х. и до 1227 г. по Р.Х." ятлă кĕнеке пичетлеттернĕ. Кĕнекере Китайăн тĕрлĕ вăхăтри карттисем, Бичурин çырнă „Китаецсем çулсене мĕнле шутлаççĕ" тата „Китаецсен виçисем, тарасисем тата укçисем çинчен" ятлă икĕ статья пулнă.

1834 çулта Бичуринăн „Историческое обозрение ойротов или калмыков с XV столетия до настоящего времени" ятлă сочиненийĕ пичетленсе тухать. Ку кĕнекене хăй вăхăтĕнче Питĕрти литература хаçатĕнче питĕ мухтаса çырнă.

Тепӗр ҫул Бичурин „Китай чӗлхин грамматикине“ пичетлесе кӑларнӑ; авторне уншӑн 1839 ҫулта Демидов премине панӑ. Ку кӗнекене вӑл 1831 ҫулта Кяхтӑра Китай чӗлхине вӗрентме уҫнӑ училище валли учебник вырӑнне ҫырнӑ. Ку кӗнеке 4 хут пичетленсе тухнӑ. Кӗнекен умсӑмахӗнче автор китаецсен ҫырулӑх историйӗ ҫинчен кӗскен каласа парать, католик тата протестант миссионерӗсемпе ытти ученӑйсем Китай чӗлхин грамматики ҫинчен ҫырнисене тишкерсе тухать.

1835—1840 ҫулсенче Бичурин статьясем нумай пичетленӗ. Вӗсене пухса 1840 ҫулта вӑл „Китай, его жители, нравы, обычаи, просвещение“ ятлӑ кӗнеке туса кӑларнӑ. Хӑйӗн статьисенче Бичурин Китайпа китаецсем ҫинчен элек саракан акӑлчансемпе французсене чунтан кураймасӑр питленӗ.

1842 ҫулта Бичурин икӗ пайлӑ „Статистическое описание Китайской империи“ ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ. Кӗнекен иккӗмӗш пайӗнче автор Китая пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсем—Манчжури, Монголи, Хӗвелтухӑҫ Туркестан тата Тибет ҫинчен ҫырнӑ. Ҫак кӗнеке Бичурин хӑй тӗллӗн ҫырнӑ чи паллӑ кӗнекесенчен пӗри пулса тӑрать.

1842 ҫулта Бичурин „Земледелие в Китае“ ятлӑ ҫӗнӗ кӗнеке кӑларнӑ, унта вӑл тӗрлӗрен ялхуҫалӑх хатӗрӗсен 72 ӳкерчӗкне кӗртнӗ. Ку кӗнекере автор Китайри ҫӗрӗҫӗн историне пӑхса тухса, вӑл питӗ авал пуҫланса кайнине палӑртать.

1844 ҫулта Бичурин, „Вӑтам государство“ термина тӗрлӗрен ӑнланнине кура, каллех, „Статистическое описание Китайской империи“ ятпах тепӗр кӗнеке пичетлесе кӑларнӑ. Анчах ку 1840 ҫулта тухнӑ кӗнеке мар, пачах урӑххи пулнӑ. Кунта вӑл Китайри государство управленине, уголовнӑй правӑна, хут вӗрентес ӗҫе тата китаецсен обществӑллӑ пурнӑҫӗпе уйрӑм ҫынсен пурнӑҫне сӑнласа кӑтартнӑ. Ҫак кӗнекешӗн ӑна 1849 ҫулта Демидов премине панӑ.

1846 ҫултан пуҫласа Бичурин, Россия Наукисен академийӗн программи тӑрӑх, китаецсен кӗнекисемпе усӑ курса, Вӑтам Азири халӑхсен историне ҫырас тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Вара вӑл 1851 ҫулта виҫӗ томлӑ „Собрание сведений о народах, обитавших в Средней Азии в древние времена“ ятлӑ кӗнеке пичетлесе кӑларнӑ. Ку сочинени пирӗн ҫул шучӗ пуҫлаyничченхи II ӗмӗртен пуҫласа 907 ҫулччен Китай чӗлхипе ҫырнӑ тӗрлӗрен историллӗ ҫырусене куҫарса пӗр ҫӗре пухнӑ произведени пулнӑ. Уншӑн автора Демидов премине панӑ.

Кӗнеке умсӑмахӗнче автор ҫапла асӑрхаттарнӑ: „Хӗвеланӑҫ Европӑри учӗнӑйсем нумайранпа ӗнтӗ Вӑтам Азири халӑхсен историне тӗпчесе вӗренеҫҫӗ. Анчах вӗсем тунӑ выводсем китаецсен вывочӗсемпе пӗр пек мар. Ун пирки нимӗн тӗлӗнмелли те ҫук, мӗншӗн тесен Хӗвеланӑҫ Европӑри ученӑйсем Вӑтам Азири халӑхсен историне тӗпчесе вӗреннӗ чухне авалхи грексем ҫырса хӑварнисемпе кӑна усӑ кураҫҫӗ, китаецсен материалӗсене пачах та пӗлмеҫҫӗ. Авалхи грек писателӗсем, паллах, хӑйсем

çырса хăварнисене пурне те хăйсен куçĕпе курма пултарайман, курнă пулсан та, кĕске вăхăтлăха çеç курнă. Нумайăшне вĕсем иртен-çӳрен усламçăсем каласа панă тăрăх кăна çыра-çыра илнĕ. Çавнашкал иртен-çӳренсем, паллă ĕнтĕ, халăхсемпе çĕршывсене хăйсем ятсем тупса параççĕ, е чăн-чăн ятсенех пăсса калаççĕ, халăх хушшинче çӳрекен халап-юмаха чăн пек туса каласа параççĕ. Грексем ун чухне Вăтам Азири халăхсем çинчен пĕлнĕ сведенисем тĕрĕс пулнă тейĕпĕр. Анчах каярахпа пулса иртнĕ вăрçăсем, халăхсем пĕр-пĕринпе хутшăнса пыни, вăхăт тата ытти сăлтавсем те авалхи государствăсен составне улăштарса, ăрусемпе чĕлхесен пĕрлĕхне майĕпенех вакласа пырса, хальхи вăхăтри сведенисен чăн-чăн пĕлтерĕшне те улăштармасăр, çапла вара малашнехи ĕмĕрсемшĕн усăмлине те тĕтрепе хупăрламасăр хăварма пултарайман", тенĕ.

Бичурин çапла кăтартса панă: Вăтам Азире мĕн авалтанпах управленин удельнăй системи пуç пулса тăнă, урăхла каласан, государство вак владенисенчен пĕрлешсе тăнă. Çак вак владенисем пĕрре пĕрлешнĕ, унтан каллех саланса кайнă та, тепĕр хут пĕрлешсе çĕнĕ государствăсем туса хунă. Монгол халăхĕ, кунсăр пуçне, çĕршывра пуç пулса тăракан çуртăн (çыннăн) ятне кура, хăйĕн ятне те улăштарса пынă. Çапла, тĕслĕхрен, гунсен çурчĕ пуç пулса тăнă вăхăтра вăл халăх—гунн ятлă, Дулчасен вăхăтĕнче—дулчаща ятлă, Монголсен вăхăтĕнче—монгол ятлă пулнă. Çакна грексем пĕлмен. Çавăнпа Хĕвеланăç Европăри ученăйсем, авалхи Грецири писательсем çырса хăварнине Китай историкĕсен кĕнекисемпе килĕштерес тесе, халăхсен ячĕсем çинчен темĕн те пĕр шухăшла-шухăшла кăларнă, тĕрĕс мар выводсем туса, Вăтам Азири халăхсен историне пĕтĕмпех пăтраштарса янă. Вара Хĕвеланăç Европăри историксем, хăйсен пĕлменнине тата пăтрашса кайнине тӳрре кăларас шутпа, китаецсем нимĕн те пĕлмеççĕ, вĕсем Вăтам Ази историне пĕтĕмпех пăтраштарса янă, тесе вывод тунă.

Китаецсем истори çинчен çырнă документсем,—тенĕ Бичурин,—„пĕр халăхран тепĕр халăха уйăрма пулăшаççĕ, вĕсем ăçта пураннине, пĕр вырăн тепĕр вырăнтан мĕн чул инçетрине те кăтартса параççĕ. Çавăнпа та нимĕн иккĕленмесĕрех çапла калама пулать: китаецсен çак сведенийĕсем, хăшпĕр енчен илсен, авалхи грексен историкĕсемпе географĕсен произведенийĕсене ăнлантарса пама та пулăшаççĕ".

Çапла ĕнтĕ, Вăтам Азири халăхсен историне тĕпчесе вĕренес ĕçре Бичуринăн кĕнеки калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă, халĕ те çавăн пекех пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хальхи вăхăтри историксем те Вăтам Азири халăхсен—узбексен, казахсен, киргизсен, уйгурсен тата ыттисен историне çырнă чухне час-часах çак кĕнекесемпе усă кураççĕ.

Кĕнеке пичетленсе тухнă хыççăнах, 1847 çулта, И. Панаевпа Н. Некрасов кăларса тăракан „Современник" журналта ăна питĕ мухтаса çырнă. Унта çапла каланă: „Пирĕн историксем

пурте хăйсен предмечĕсем тĕлĕшпе, Иакинф атте Азири чи пĕчĕк йышлă ăрусем тĕлĕшпе ĕçленĕ пекех, тÿрĕ кăмăлпа тата тăрăшса ĕçлес пулсан, пирĕн вара хальхи пек пăтранчăк истори пулман пулĕччĕ, историе вĕренмелли япăх мар учебниксем пулнă пулĕччĕç, мĕншĕн тесен, Иакинф аттен ĕçĕсем историксемшĕн, уйрăмах та вĕсен предмечĕсем тăрăх, ют пулин те, çав ĕçсенчен истори яланах мĕн усăллине илсе тăрĕ".

„Собрание сведений о народах, обитавших в Средней Азии в древнейшие времена" кĕнекине СССР Наукисен академийĕ 1950 çулта çĕнĕрен пичетлесе кăларнă. Ăна пичете парас умĕн совет ученăйĕ Н. В. Кюнер унăн текстне китаецсен тексчĕпе тепĕр хут тĕрĕслесе тухнă та, Бичурин питĕ тĕрĕс куçарнине палла тунă.

Çав 1851 çултах вăл „Географический указатель мест на карте к истории древних среднеазиатских народов" ятлă кĕнеке те пичетлесе кăларнă.

Паллах ĕнтĕ, Бичурин Китай çинчен çырнă кĕнекесемпе статьясенче йăнăшсем те сахал мар. Автор тунă выводсенчен нумайăшĕ халĕ кивелнĕ, вăл вилнĕренпе иртнĕ 100 çул хушшинче Китай тата Азири ытти çĕршывсем çинчен вĕрентекен наука питĕ нумай малалла кайнă. Çапах та, истори тĕлĕшпе илсен, Бичурин тунă ĕçсем питĕ хаклă. Хăйĕн ĕçĕсенче вăл китай чĕлхине, унăн авалхи çырулăхне çав тери лайăх пĕлнине, çак ĕçчен халăха хăй юратнине кăтартса панă.

Маларах асăннă пысăк кĕнекесемсĕр пуçне, Бичурин Китай историйĕ, статистики, искусствипе литератури çинчен журналсемпе хаçатсем валли статьясем нумай çырнă.

## VI

Бичурин китай халăхне юратнă, унăн йăлисене, культурипе искусствине питех те хисепленĕ. XIX ĕмĕрĕн малтанхи çурринче малта пыракан интеллигенцин чи пысăк представителĕсенчен пĕри, Бичурин халăхран ютшăнман, вăл вăхăтри малта пыракан çынсемпе—декабристсемпе—çыхăну тытнă.

Бичурин мĕн виличченех—52 çул хушши—монах пулнă. Апла пулин те, вăл чиркÿ догмачĕсене пăхăнман, чиркĕве çÿремен. Пĕр палла публицист Н. Щукин каласа панă тăрăх, вăл „ячĕшĕн кăна монах пулнă, шухăш-кăмăлĕпе вара пачах та монах пулман".

Вăл чăнах та çаплине 1818 çулта, Бичурин Пекинри духовнăй мисси пуçлăхĕ пулнă вăхăтра, Иркутск генерал-губернаторĕ Пестель ун çинчен çырса панă донесенирен те лайăх курăнать: „Вăл Пекинра аскăн пурнăçпа пурăнать, халăх çÿрекен вырăнсене тивĕççĕр тумпа тухать, театрсене, трактирсене, уйрăм çынсен çурчĕсене кĕрсе çÿрет, чиркÿре служить тумасть, пĕтĕçтерсе каласан, хăйĕн ĕçне тата миссионер обязанноçĕсене

туса пымасть". Паллӑ ӗнтӗ, Пекин ҫинчен ҫырма, унӑн планне ӳкерсе илме Бичуринӑн таҫта та кӗрсе тухмалла, такампа та калаҫмалла пулнӑ. Кунсӑр пуҫне, вӑл кӗнекесем питӗ нумай туяннӑ, вӗсене магазинсенче те, уйрӑм ҫынсем патӗнче те шыранӑ.

Бичурин мӗнле монах пулни ҫинченех тата унӑн тӑванӗ Н. С. Моллер, амӑшӗ каласа панӑ тӑрӑх, ҫапла аса илсе ҫырать: „Анне мана час-часах ҫапла калатчӗ: ...мӗнле монах-ха вӑл, хӑвах куратӑн—типӗ тытмасть, чиркӗве ҫӳремест, килте те путлӗн сӑхсӑхмасть, монахсене чунтан кураймасть".

Тата тепӗр факт. „Древняя и новая история" журналӑн 3-мӗш номерӗнче, 1877 ҫулта, „К. П. Брюлловпа 1846 ҫулта паллашни" ятлӑ статьяра пӗр автор ҫапла каласа парать: „Брюллов патне пырса кӗрсен, эпӗ ҫакнашкал картина куртӑм: Брюллов камин умӗнче каштансем ӑшаласа ларать, унӑн вӗренекенӗсенчен пӗри сӗтел ҫине улӑхса ларнӑ та гитарӑпа ташӑ кӗвви калать, ӗлӗк монах пулнӑ Иакинф атте, Китайра нумай пурӑннипе тата ҫак ҫӗршыв ҫинчен сочиненисем ҫырса пичетлесе кӑларнипе чапа тухнӑскер, ташша ҫапать... Сӗтел ҫинче ҫур штоф эрех тата сырпа колбаса пур хӑйсен". Ку вӑл ҫапла пулма та пултарнӑ, мӗншӗн тесен Брюлловпа Бичурин пӗрпӗрне питӗ нумайччен пӗлсе пурӑннӑ, Брюллов Бичуринӑн икӗ портретне ӳкернӗ.

1848 ҫулта Бичурин купец евӗрлӗ тумланса итальянецсен Рубин, Тамбурен тата ыттисен оперисене итлеме ҫӳренӗ, 1850 ҫулта гражданла тумланса итальянецсен паллӑ ташӑ ӑстине—Тальоние кайса курнӑ.

Хӑй монах пулни Бичурина питӗ кӳрентернӗ, вӑл ӑна ӗҫлеме те кансӗрленӗ. Ҫакна унӑн ҫывӑх тусӗсем те пӗлнӗ, ӑна монахран кӑларма темиҫе хутчен те хӑтланса пӑхнӑ. Сӑмахран, 1831 ҫулхи майӑн 29-мӗшӗнче, Бичуринпа калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх, вице-канцлер тата Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Нессельроде синодӑн обер-прокурорӗ умӗнче Бичурина монахран кӑларасси ҫинчен ыйту хускатнӑ. Обер-прокурор Серафим митрополитпа калаҫса татӑлнӑ та, Иакинфа монахран кӑларма чаракан нимӗнле сӑлтав та ҫук, „анчах унӑн хӑйӗн ун ҫинчен святейший синода прошени ҫырса памалла", тесе пӗлтернӗ. 1831 ҫулхи августӑн 29-мӗшӗнче Бичурин хӑйне монахран кӑларма ыйтса синода официальнӑй прошени ҫырса панӑ.

Ку вӑхӑтра Бичурин Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин Ази департаменчӗн хӑшпӗр ответлӑ сотрудникӗсемпе пӗрле Хӗвелтухӑҫ Ҫӗпӗрте, Кяхта хулинче пулнӑ. Кунта вӑл икӗ ҫул пурӑннӑ, Ҫӗпӗр ҫинчен питӗ нумай материалсем пухнӑ.

Синод Бичурина монахран кӑларма йышӑннӑ. Бичурина монахран Чулхула архиепископӗ, лешӗ Ҫӗпӗртен таврӑннӑ чухне, кӑлармалла пулнӑ. Анчах каярахпа, 1832 ҫул пуҫламӑшӗнче, ҫӗнӗ приказ килсе ҫитнӗ: Бичуринӑн Чулхулара чарӑнса тӑмасӑр, тӳрех Петербурга таврӑнмалла.

Кунта ӗҫ ҫапла пулса иртнӗ: синод Бичурина монахран кӑларма йышӑннӑ хыҫҫӑн темӗн чухлӗ вӑхӑт иртсен, Серафим митрополит Бичурина монахран кӑларма килӗшменни ҫинчен ҫырса пӗлтернӗ. Вара Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствинчи пысӑк ҫынсенчен хӑшӗ-пӗрисем тата ученӑйӑн тусӗсем синодран ҫак ыйтӑва тепӗр хут пӑхса тухма ыйтнӑ. 1832 ҫулхи майӑн 31-мӗшӗнче, Серафим митрополитпа ытти „тӗттӗм" вӑйсем хирӗҫленӗ пулин те, синод Бичурина монахран кӑларма тепӗр хут йышӑннӑ. Анчах пӗтӗм ӗҫе I Николай патша пӗтерсе лартнӑ. Синод йышӑннӑ постановлени ҫине вӑл: „монахран тухма ирӗк парас мар", тесе резолюци ҫырса хунӑ. Бичурина монахран кӑларасси ҫинчен икӗ ҫула тӑсӑлнӑ ӗҫ вара ҫапла путланса ларнӑ.

Ҫапах та Бичурин монахран тухас шухӑша пӑрахман. Унӑн тусӗсем ку ыйтӑва тивӗҫлӗ влаҫсем умӗнче темиҫе хут та хускатнӑ, анчах вӑл кӑлӑхах пулнӑ.

1836 ҫул вӗҫӗнче Бичурин каллех Кяхтӑна тухса кайнӑ та унта пӗр ҫулталӑк ытла пурӑннӑ. Кунта вӑл „Китай чӗлхин грамматикипе" ӗҫленӗ, училище валли китай чӗлхи тӗлӗшпе нумай кӑтартусем парса хӑварнӑ.

Ҫӗпӗрте пурӑннӑ вӑхӑтра Бичурин, Байкал кӳлли таврашӗнче пулса, „Северные цветы" альманахра „Байкал" ятлӑ статья пичетлесе кӑларнӑ.

Ҫӗпӗрте пулнипе усӑ курса, Бичурин монгол чӗлхине вӗреннӗ.

Хӗвелтухӑҫ Ҫӗпӗрте Бичурина ирӗк пулнӑ: кунта вӑл вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳреме, литература тӗлӗшпе ӗҫлеме, хӑйӗн столицӑри тусӗсем патне ҫырусем ҫырма пултарнӑ. Ҫакна май кунта вӑл нумай вырӑнсенче, вӑл шутрах декабристсем пурӑнакан вырӑнсенче те пулса курнӑ. Халӗ ӗнтӗ вӑл Нерчинскра, Селенгинскра, Александровскра тата декабристсене ссылкӑна янӑ ытти вырӑнсенче те пулни паллӑ. Декабристсемпе—Пущинпа, Бестужевпа тата ыттисемпе те—ҫывӑх паллашнӑ. Кунта тата ҫакна асӑрхаттарас пулать: хӑйӗн Петербургри тусӗсенчен, уйрӑммӑн илсен, А. С. Пушкин Бичурина декабристсем патӗнче пулса курма, вӗсене ҫырусем пама, калаҫса пӑхма хушма пултарнӑ.

Пӗр тӑван Бестужевсемпе Бичурин ҫывӑх туслӑ пулнӑ. Ҫӗпӗрте пӗр-пӗринпе тӗл пулнӑ вӑхӑтра Бестужевсенчен пӗри Бичуринӑн сӑнне ӳкерсе илнӗ. Бестужев, ӑста слесарь, хӑйӗн сӑнчӑрӗнчен Бичурина пысӑк тимӗр хӗрес туса панӑ та, ҫак хӗресе Бичурин мӗн виличченех ҫакса ҫӳренӗ.

Паллах, ҫакӑн ҫинчен вӑл сӑмах сарман. Ҫакна вӑл пӗррехинче, 1848 ҫулта, маларах асӑннӑ Н. С. Моллера каласа панӑ: „Ҫакна мана тетем ҫав тери хурланса, чӗрине ыраттарса каласа пачӗ,—ҫакӑн хыҫҫӑн унӑн куҫӗсем шывланчӗҫ", тесе аса илет вӑл.

## VII

Никита Яковлевич Бичурин XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнчи литература общественноçĕпе питĕ çывăх пулнă. Вăл хăй те çав вăхăтри нумай литература журналĕсемпе альманахĕсене çырса тăнă.

Бичурин вырăссен аслă писателĕпе Александр Сергеевич Пушкинпа çывăх пулнине архиври документсем те кăтартса параççĕ. Пушкинпа Бичурин 1827 çулта паллашнă.

„Пушкина Китайпа паллаштарас ĕçре,—тесе çырнă Н. Ипполитов 1837 çулта „Пушкин и Китай“ ятлă статьяра,—вăл вăхăтра Петербургра питех те паллă пулнă Иакинф Бичурин питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă... Вăл вăхăтри Китая питĕ лайăх пĕлни, темĕнле авантюризм чапĕпе пĕрлешсе, Бичурина Петербургри литература общественноçĕн паллă представителĕсемпе—М. П. Погодинпа, В. Ф. Одоевскипе, И. А. Крыловпа, Глинкăпа т. ыт. те—çывăх паллашма май панă. Унпа Пушкин та интересленме тытăннă, ăна вара Бичуринпа 1828 çул тĕлнелле паллаштарнă.“

Аслă писателĕн килти библиотекинче Бичурин парнелесе панă кĕнекесем те тупнă. Сăмахран, 1828 çулта пичетленсе тухнă „Описание Тибета в нынешнем его состоянии“ ятлă хăйĕн кĕнекине Бичурин Пушкина çапла çырса панă: „Манăн милостивăй государе Александр Сергеевич Пушкина куçаракантан, чăнласах хисепленине палăртса. Апрелĕн 26-мĕшĕ, 1828 çул. Куçараканĕ Иакинф Бичурин“. Пушкина Бичурин хăйĕн ытти кĕнекисене те парнелесе панă. Тĕслĕхрен, 1829 çулта пичетленсе тухнă „Троесловие“ ятлă кĕнекине „Александр Сергеевич Пушкина куçаракантан“, тесе çырса панă.

1829—1830 çулсенче Пушкин, Бичурин хĕтĕртнипе, Китая кайса килме хатĕрленнĕ пулнă. Анчах I Николай патша поэта Китая та, урăх çĕршывсене те яман.

Пушкин Бичуринпа туслă пулнине аслă поэт „К истории Пугачевского бунта“ валли çырнă пĕр пĕчĕк асăрхаттару та кăтартать. Кунта, 8-мĕш пунктра, Пушкин çапла çырса хунă: „Калмăксем килсе тапăнни çинчен чи тĕрĕс те шанчăклă хыпарсемшĕн пирĕн Иакинф аттене тав тăвас пулать. Вăл питĕ нумай пĕлни тата унăн тӳрĕ кăмăлпа тунă ĕçĕсем эпир Хĕвелтухăçĕпе мĕнле çыхăнусем тытнине питĕ лайăх çутатса пачĕç. Тав тусах эпир кунта унăн калмăксем çинчен калакан халĕ пичетленсе тухайман кĕнекинчи сыпăка кĕртетпĕр“.

Документсем кăтартса панă тăрăх, Бичурин В. Ф. Одоевскипе, А. М. Шегренпа, А. А. Краевскипе, И. А. Крыловпа, И. И. Панаевпа тата вăл вăхăтри ытти литераторсемпе те çыхăну тытнă. Çавăн пекех „Московский телеграф“ журнал урлă вăл Мускав писателĕсемпе те—М. П. Погодинпа, Н. И. Надеждинпа, К. А. Невольнăйпа, Юрий Венелинпа, Н. С. Щукинпа, С. П. Шевыревпа т. ыт. те—паллашнă. Ф. А. Бюлер

çырнă „Николай Алексеевич Полевой“ ятлă статьяра вăл вăхăтри çынсем пухнă писательсен автографĕ хушшинче Бичурин хушамачĕ те пулнине палăртать.

Бичурин Питĕрти литература салонĕсенче те пулнă. Çавнашкал салонсем Волконская княгиня, Карамзин, В. Ф. Одоевский, Краевский патĕнче пулнă. М. П. Погодин çак салонсене çӳренĕскер, В. Ф. Одоевские аса илсе çапла çырнă: „Кунта, В. Ф. Одоевский патне, хаваслă Пушкин, китаецсенни пек хĕсĕк куçлă Иакинф атте, шыçмак çулçӳревçĕ, нумаях пулмасть Китайран таврăннă Шиллинг нимĕç-барон, чĕрĕ те илемлĕ Ростопчина графиня, Глинка, хими профессорĕ Гесс, лӳппер, анчах нумай пĕлекен археолог Сахаров, Крылов, В. Жуковский яланах пухăнатчĕç“. Кунта çавăн пекех драматург А. А. Шаховской, Блудов тата ыт. те пырса çӳренĕ. Одоевскин салонĕнче Бичурин пулнине И. И. Панаев та хăйĕн „Литература асаилĕвĕсенче“ лайăх кăтартса парать.

Бичурин литераторсем патне çырнă çырусем те сахалах пулман-тăр. Архивсенче ку таранччен Бичурин А. А. Краевскипе В. Ф. Одоевский патне çырнă çырусене кăна шыраса тупнă-ха.

Ку вăхăтра час-часах пулса иртнĕ литература вулавĕсене те Бичурин хутшăнмасăр юлман. 1881 çулта „Русский вестник“ журналта пичетлесе кăларнă пĕр статьяра каланă тăрăх, çакнашкал вулавсенчен пĕринче Брюлловăн „Последний день Помпеи“ ятлă картинине пăхса тухнă. Литература вулавĕсенче час-часах И. А. Крылов, Вяземский, Полевой, Сенковский профессор, Одоевский, В. А. Жуковский тата ыттисем те пулкаланă. Çак статья авторех çав вулавсене яланах Иакинф атте çӳренине кăтартса парать. Вăл чăн-чăн монах мар, ӳт çиет, ывăнма пĕлмесĕр картла вылять, лайăх эрех юрататъ, сăмах çаптарма пĕлет, хăй Александро-Невски лаврăра пурăнать пулин те, ăна хăйне уйрăм правăсем панине пула, ытти монахсем ирхи кĕлле кайнă вăхăтра тин киле таврăнать“.

Салонсенче, литература вулавĕсенче Бичурин Китай çинчен çав тери хавасланса каласа панă. Бичурин вилни 50 çул тултарнине асăнса М. И. Моллесон çапла çырнă: „Пĕррехинче Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Ази департаментĕнче ĕçлекен сотрудник вырăн çинчен те тăрайми пулнă ватă Бичурин патне Китай çинчен темĕн ыйтса пĕлме пынă. Иакинф лешĕн пĕр ыйтăвне хирĕç те ответ паман. Вара чиновник унпа китай чĕлхипе калаçса пăхма шут тытнă. Китай чĕлхине илтсенех, сывмар çынна чун кĕрсе кайнă, унăн куçĕсем чарăлнă, вăл хăй сывмаррине мансах, калаçма тытăннă та, Китай çинчен хавхалансах питĕ нумай каласа панă“.

Бичурин виçĕ çул хушши вырăн çинчен тăраймасăр асапланса выртнă хыççăн, 1853 çулхи майăн 11-мĕшĕнче вилнĕ. „Кирек епле пулсан та,—тесе çырнă унăн некрологĕнче Щукин,—малашнехи ăру çак монаха чĕререн тав тăвĕ: вăл ĕмĕрне хăйне валли мар, тăван çĕршыв валли ĕçлесе ирттерчĕ“.

## VIII

Бичурин çырнă хăшпĕр кĕнекесене пăхса тухни, вăл XIX ĕмĕрĕн малтанхи çурринче Российăн литература общественноçĕпе тата малта пыракан çынсемпе—В. Г. Белинскипе, А. С. Пушкинпа, М. И. Глинка композиторпа, декабристсемпе—çывăх пулни унăн ĕçĕсем çинчен кĕскен çапла выводсем тума май пăраççĕ: Никита Бичурин пурнăçĕпе ĕçĕн тĕп тĕллевĕ — Китай çинчен, Азири ытти халăхсен пурнăçĕ çинчен тĕрĕссине каласа параси пулнă, ку тĕлĕшпе вăл калама çук пысăк ĕçсем туса, ытти вырăс ученăйĕсем валли анлă çул уçса панă.

Бичурин ĕçĕсемпе усă курса, вырăс ученăйĕсем Китая тĕпчесе вĕренес ĕçе Хĕвеланăç Европăри ученăйсем хыççăн мар, пачах çĕнĕ, хăйне уйрăм, тĕрĕс çулпа аталантарса пынă.

Вырăс общественноçĕн малта пыракан çыннисемпе çыхăну тытни Бичурина та тивĕçлĕ влияни памасăр тăма пултарайман. Вăл вăйсăр халăхсене тĕн сĕрĕмĕпе усă курса пăхăнтарнине хирĕç, уйрăмах та католик-миссионерсен ирсĕр ĕçĕсене хирĕç тўреммĕнех тухса каланă, Китайăн никама пăхăнмалăхне хўтĕленĕ. Çапла, Инçетри Хĕвлтухăçĕнче Англи захватчикла тата опиум вăрçи пуçласа ярсан, китаецсен хутне кĕрсе, вăл темиçе статья пичетлесе кăларнă.

Бичурин тăван çĕршывăн, вырăс халăхĕн хĕрўллĕ патриочĕ пулнă, отечественнăй наукăна, вырăс чĕлхине чунтан хисепленĕ, вырăс чĕлхине хисеплемен космополитсене тивĕçлĕ отпор панă. „Пĕрремĕш Петртан пуçласа,— тенĕ вăл,— ку таранччен эпир нимĕн шухăшласа тăмасăрах ют çĕршыв писателĕсем умĕнче пуç тайса тăман пулсан, çутта кăларас ĕçĕн нумай отраслĕсенче пирĕн тахçанах хамăрăн никама пăхăнманлăх пулнă пулĕччĕ“. Вăл ытти вырăс çыннисене наука кĕнекисене тăван чĕлхепе—вырăс чĕлхипе çырма чĕннĕ.

Никита Бичурин çынна юратнă, крепостниксен тискер ĕçĕсем ăна тарăхтарнă, вăл çынсен хутне кĕме тăрăшнă. Маларах асăннă Н. С. Моллер каласа панă тăрăх, Моллерсен Петербург çывăхĕнчи имениййĕнче пулнă вăхăтра Бичурин айăпа кĕнĕ кашни крепостнойăн хутне кĕнĕ, ăна наказани парассинчен çăлса хăварма тăрăшнă.

Бичуринăн ĕçĕсене В. Г. Белинский питĕ пысăка хурса хакланă, вырăс литературин обзорĕсенче Бичурин ĕçĕсене вăл уйрăммăн илсе палăртнă. Çав вăхăтрах В. Г. Белинский Бичурин Китайăн авалхи историйĕпе общество стройне идеализациленине хытă критикленĕ. Вăл вăхăтри Китай ĕмĕрлĕхе çывăрса кайнă çĕршыв пулнине Бичурин асăрхаман, ăна çак ыйхăран вăратсан çеç малалла аталантарма пулнине ăнланса илеймен, унăн малашлăхне курман. Çакă ăна йăнăш шухăшсемпе выводсем патне илсе пынă.

* * *

Никита Яковлевич Бичурин вилнĕренпе çĕр çул иртрĕ. Китая тата Азири ытти çĕршывсене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе унтанпа питĕ пысăк çитĕнӳсем тунă, ку тĕлĕшпе ытти вырăс ученăйĕсем те, Бичурин пекех, пысăк ĕçсем турĕç.

Октябрьти Аслă социализмлă революци хыççăн çак енпе уйрăмах пысăк ĕçсем тунă. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Совет влаçĕ пире хамăр çĕршыври халăхсене кăна мар, колонисенчи, вăл шутрах Китайри тата Азири ытти çĕршывсенчи халăхсене тĕпчесе вĕренмелли лайăх условисем туса пачĕ.

Китай халăхĕн пурнăçĕнче историллĕ пысăк событисем пулса иртрĕç.

Вуншар çул хушши Англипе Америка тата Япони империалисчĕсен пусмăрĕ айĕнче асапланса пурăннă Китай халăхĕ Китайри Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе мĕнпур захватчиксене Китай территорийĕнчен хăваласа кăларса тата хăйсен капиталисчĕсене сирпĕтсе антарса, влаçа хăй аллине илчĕ, Китай халăх республики туса хучĕ те пĕтĕм çĕршывне социализм çулĕпе аталантарса пыма тытăнчĕ.

Аслă Китай халăхĕ, Совет Союзĕнчи халăхсемпе алла-аллăн тытăнса тата Совет Союзĕ тӳрĕ кăмăлпа пулăшса пынипе, çĕнĕ пурнăç тăвать, Совет Союзĕ ертсе пыракан мир лагерĕнче тăрса, пĕтĕм тĕнчери çирĕп миршĕн кĕрешет.